Обществăлла организацисенче

# 60 çул вăл кĕске вăхăт мар

Ĕçлĕ Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Пĕтĕм Раççейри куç курманнисен обществин членĕсем хăйсен организацине йĕркеленĕренпе 82 çул çитрĕ.

1925-мĕш çулхи апрель уйăхĕнче Мускавра Пĕтĕм Раççейри куç курманнисен обществин 1-мĕш съезчĕ пулнă. Вăл çак организацие çирĕплетнĕ тата унăн Уставне йышăннă. Çакăн хыççăн облаçсенче, крайсенче, автономлă республикăсенче ВОС уйрăмĕсем, вĕрентӳпе ĕçлев мастерскойĕсем йĕркеленме тытăнаççĕ.

Пĕтĕм Раççейри куç курманнисен обществин Чăваш Республикинчи организацин пурнăçĕ 1930-мĕш çултан пуçланать. Март уйăхĕнче Канаш хулинче районсенчен 19 делегат пухăнса съезд ирттереççĕ. Вăтăрмĕш çулсенче пирĕн республикăра куç курманнисем 4 пин çын ытла пурăннă, вĕсенчен 85-шĕ çеç общество членĕнче тăнă. 1932-мĕш çулта республикăра районсен пĕрлештернĕ 5 ВОС уйрăмне йĕркеленĕ: Куславкка, Çĕрпӳ, Канаш, Вăрмар, Йĕпреç, каярахпа – Патăрьел районĕнче.

Муркаш районне вăрçă вăхăтĕнче туса хунă. Унччен куç курман çынсем Сĕнтĕр, Ишлей, Элĕк районĕсенче шутланнă.

1947-мĕш çулта çак вичĕ районти инвалидсене пĕр организацие пĕрлештернĕ. Çĕнĕрен йĕркеленнĕ Муркаш районĕн пуçламăш организацине ертсе пыма Сĕнтĕр çыннине Константин Иванович Щеглова çирĕплетнĕ. 1954 çулта, виçĕ районта ĕçлеме йывăррине шута илсе (К. Щеглов – 1 ушкăн инв.), районсенче пуçламăш организацисем йĕркеленĕ. Муркаш районĕнчи пуçламăш организацине ертсе пыма Константин Прокопьевич Николаева çирĕплетеççĕ. 1959 çулта председатель пулма Афанасий Андреевич Смирнова шанаççĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче куç курман çынсене производство предприятийĕсене вырнаçтарас ĕç çĕнĕрен вăй илет. Пирĕн район инваличĕсем те çак предприятисенче килти условисенче халăха валли кирлĕ таварсем туса хатĕрлеççĕ. Çав вăхăтра куç курман 21 çынна сетка çыхма ĕçе вырнаçтарнă. 20-шер çулах Шупашкарти УПП-ăра сетка çыхнă 1 ушкăн инваличĕсем хушшинче Н.И. Канкин (Тяпакасси), О.Н. Смелова (Иштерек) тата ытти инвалидсем те.

70-мĕш çулсенче Муркашри пуçламăш организацине Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ Порфирий Петрович Яхунин ертсе пырать. 1993-мĕш çулта çеç вырăнти организацие Муркаш район администрацийĕн çуртне куçараççĕ. Алексей Андреевич Андреев, учитель пулнă май, 10 çула яхăн организацие çирĕплетессишĕн ырмиканми тăрăшнă, ВОС членĕсене пĕрлештерсе активлă пулма вĕрентнĕ. Паянхи кун Муркашпа Элĕк районĕсенчи 160 ытла куç курман инвалида пăр чăмăра пĕрлештерет Муркашри ВОС организацийĕ. Унăн ертӳçи пулма 1990 çулта Анастасия Дмитриевна Михайловава суйланă. Ачаранах куç курманнине аван ăнланакан А. Михайлова çамрăк ертӳçĕ куç курман инвалидсен пурнăçĕнчи йывăрлăхсене, килте е обществăра килсе тухакан кăлтăксене сирсе яма ялanах пулăшса пырать. 16 çул ытла куç курман кашни инвалидăн нуши-тертне ăнланса, вырăнти организацине çирĕплетсе, икĕ район администраци, социаллă хӳтлĕх пайĕнче ĕçлекен, Раççейри пенси фончĕн специалисчĕсемпе, ВОС-ăн Чăваш правленийĕпе тачă çыхăнса ĕçлет Муркашри куç курманнисен вырăнти организацийĕ. Бюрона, ревизи комиссине суйланă ВОС членĕсен активлăхĕ савăнтарать.

Çак кунсенче, çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнче, кĕçнерни кун, Муркашри куç курманнисен вырăнти организацийĕ хăйĕн 60 çулхи юбилейне паллă турĕ: тĕп хуларан, Элĕкрен, ытти районсенчи хăнасем нумайăн пулчĕç.

**Е. НИКИТИНА,**
**ВОС организацийĕн секретарĕ.**

Милици хроникинчен

# Ача телейĕ е эрех...

Кун-çул урапи тикĕс чупайманшăн, тĕрлĕ пăтăрмахшăн пурнăçа айăплама хăнăхнă эпир. Аса илер-ха асаттесен иртнĕ ĕмĕрĕсене. Çиме çăкăр та, тăхăнма çи-пуçĕ те пулман. Çапла вара ял-ял витĕр ыйткаласа та çӳренĕ, ачапăчашăн тăрăшнă. Паянхи пурнăça вара ӳпкелетпĕр, пуçсене эрех-пируспа минрететпĕр, çитменнине çамрăк ăрăвăн кун-çулне хуçатпăр, ăраскалне тататпăр. Йĕри тавралла пăхар-ха, пур-и çавăн йышшисем?

Пур! Çакă вара пурнăçри ытла та йӳçĕ чăнлăх.Акă Çĕн Чемей ялĕнче еплерех пăтăрмах пулса тухнă. 36 çулхи арçын, çак ялта çуралса ӳснĕскер, халĕ Шупашкар хулинче пурăнать. Тăван яла таврăнсан 11 çулхи арçын ачана хĕнет. Ку çеç те мар, унăн 35 çулхи амăшне вара мотыгпа хĕнет. Çак ĕç 21 сехетре пулса иртнĕ. Тепĕр сехетрен шар курнисемпе пĕр çуртрах пурăнакан 35 çулхи арçын, арçын ачан амăшĕпе кавар тăваççĕ. Çапла вара пускилти пурăнмалли çуртăн хăмине, пăта кăлармалли хатĕрпе тăпăлтарса, 11 çулхискерне кĕртсе яраççĕ. Мĕн патне тетĕр-и? Пĕр литр çурă эрех патне. Нивушлĕ çав териех паха пуçа минретекен наркăмăш, "çамрăк калчана" амантса хăварни те чĕрери пĕр хĕлĕхне те тапратмасть-ши тата. Ача-пăча телейне эрехпе улăштарма хал çитеретпĕр пулсан, камсем, эпир!

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕшĕн

# "Автомототранспорт хатĕрĕсем" операци пырать

2007 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчи регистраци учетĕнче пĕтĕмпе 6405 автомототранспорт хатĕрĕ, вăл шутран 3836-шĕ физически лицосенче шутланать. Иртнĕ çул патшалăх техника тĕрĕслевĕ витĕр 38,0 процент автомототранспорт хатĕрĕ тухнă. Юсавсăр техника çул-йĕр çине тухнипе пĕр синкер ĕç пулнă. 2006 çулта Чăваш Республика территорийĕнче автомототранспорт хатĕрĕсене вăрланă, йĕркене пăсса усă курнă 405 факт тупса палăртнă, вĕсенчен 30,4 проценчĕ шыравра. Çавăнпа та çул-йĕр çинчи синкерлĕхпе йĕркесĕрлĕхе сирес тесе хушма профилактика ĕçĕсем туса ирттереççĕ.

Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнче регистраци учетĕнче тăман, палăртнă вăхăтра патшалăх тĕрĕслевĕ витĕр тухман, шыравра шутланакан, çавăн пекех усă курма юрăхсăр автомототранспорт хатĕрĕсене тупса палăртас тĕллевпе июнĕн 15-30-мĕшĕсенче Муркаш районĕн территорийĕнче "Автомототранспорт хатĕрĕсем" профилактика операцийĕ иртет.

**С. ИВАНОВ, районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕ.**

Çын тата саккун

# Саккуна пĕлменни айăплава çемçетмĕ

**Паянхи рубрикăн ыйтăвĕсем çине район прокуратурин ĕçченĕсем хуравлаççĕ, ыйтăвĕсене Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.**

**Р.ИЛЛ.: – Çемьери мăшăрсенчен пĕри уйрăлма шутлать, çакăн пек ĕçе тума вĕсем пĕр тан праваллă-и?**

**С.А. ФИРСОВ (прокурор):** –Çук, пĕр тан праваллă мар. Енчен те арăмĕн çие юлнă пулсан тата ача çуралсан, пĕр çулталăк хушшинче упăшкан уйрăлма ирĕк çук (РФ СК 17ст.). Енчен те мăшăрсенчен пĕрине виçĕ çултан ытларах вăхăтлăх колоние янă пулсан, ирĕкре юлни унăн ирĕкĕсĕрех уйрăлма пултарать.

**Р.ИЛЛ.: – Пĕри теприне пĕр-пĕр япала парнелеме шутланă. Парнелĕве хăçан ятарлă килĕшӳ çырса тăваççĕ, хăçан сăмахпа кăна каласа?**

**С.А. ФИРСОВ (прокурор):** –Енчен те пурлăхăн хакĕ чи пĕчĕк ĕç укçин пилĕк виçинчен ытларах пулсан, пурлăха парнелессине ятарлă килĕшӳ çырса тăваççĕ (РФ ГК 574ст.). Ытти чухне вара çырмасан та юрать.

**Р. ИЛЛ.: – Урамра утакан гражданинăн докуменчĕсене милици ĕçченĕсен тĕрĕслеме ирĕк пур-и?**

**Ю.М. СЕМЕНОВ (прокурор çумĕ):** – Енчен те гражданина йĕрке пăснă, преступлени тунă е шыравра тесе шутлаççĕ пулсан, милици ĕçченĕн документсене тĕрĕслеме ирĕк пур.

**Р. ИЛЛ.: – Çемье çавăрнă чухне хушамата мĕнле суйлаççĕ?**

**А.С. ВИКТОРОВ (прокурорăн аслă пулăшуçи):** – Çемье çавăрнă май мăшăрсенчен кашнийĕнех малтанхи хушаматне хăварма ирĕк пур. Çавăн пекех вĕсем иккĕшĕн хушаматне пĕрлештерме те пултараççĕ, паллах, пĕрин хушамачĕ унччен йĕкĕр пулман пулсан (РФ СК 32ст.). Ун пек чухне вара малтанхи хушамата хăварма е мăшăрăн хушаматне илме е хушаматăн пĕр пайне мăшăрăн хушамачĕпе сыпăнтарма ирĕк пур.

**Р. ИЛЛ.: – Вун тăватă çула çитмен çамрăк сиен кӳнĕшĕн кам яваплă?**

**Е.Н. ЕГОРОВ (прокурорăн пулăшуçи):** – Кун пек чухне ашшĕ-амăшĕ айăплă, енчен те сиен вĕсен айăпĕпе пулманнине çирĕплетеймеççĕ пулсан. Пăтăрмах вăхăтĕнче ача шкулта, больницăра тата çавăн йышши ытти учрежденисенче пулнă пулсан, вĕсемех яваплă шутланаççĕ. Анчах та учреждениесен ача чарусăрлăхĕшĕн тӳленĕ хака суд урлă шыраса илме ирĕк пур. Енчен те ашшĕ-амăшĕ сиен хакне саплаштараймасть, сиен тăвакан саплаштарма пулсан, çакăн пек чухне судăн тăкак хакĕшĕн 14 çул çитмен çамрăка яваплă тесе шутлама ирĕк пур.

Редакци почтинчен

# Чĕререн тав тăватпăр

Пурăнма пĕлсен пурнăç мĕн тери илемлĕ. Паллах, сывлăх çирĕп пулсан.

Муркашри тĕп больницăри хирурги уйрăмĕнче сипленме тиврĕ. Пире пурне те çав тери тăрăшса сиплерĕç, ура çине тăратрĕç.

Хирурги уйрăмĕн заведующийĕ Г.М. Огурцов кунта чылайранпа ĕçлекен пысăк опытлă, ăста хирург. Вăл хăй ĕçленĕ тапхăрта çĕршер çынна тĕрлĕ чирсем чухне операци туса вилĕмрен çăлнă, сахал мар тав сăмахĕ илтнĕ.

Эпир паян пурте кунти врач-травматолога Л.Н. Андреева ырăпа асăнатпăр. Вăл çут тĕнчене врач пулмах çуралнă.

Хирурги уйрăмĕнче ĕçлекенсене пурне те пире сыватнăшăн чĕререн тав тăватпăр. Хăвăра упрăр, яланах çирĕп сывлăхлă пулăр. Кăмăлăрсем яланах уçă, ĕмĕрĕрсем вăрăм пулччăр.

**Н. ТОДИНОВА, А. ФЕОФАНОВА, В. РОМАНОВА, М. СМИРНОВА, А. АНАНЬЕВА.**




с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 5. Тел.: 2-13-80

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Срочно сниму однокомнатную или двухкомнатную квартиру в с. Моргауши (своевременную оплату, чистоту и порядок гарантируем).**
**Тел.: 8-927-865-16-50; 8-906-381-38-73.**

**Продаю черно-белую корову, возраст 2 года, должна отелиться 05.11.2007г., корову черного цвета, возраст 3 года, должна отелиться 16.01.2008г.**
**Телефоны: (8352)42-87-85, 8-961-338-01-18.**

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СОЮЗ КРЕДИТНЫХ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИХ КООПЕРАТИВОВ ГРАЖДАН
ПРЕДОСТАВЛЯЕМ КРАТКОСРОЧНЫЕ
ЗАЙМЫ
ПРИНИМАЕМ НА ХРАНЕНИЕ
СБЕРЕЖЕНИЯ
14 - 30 % ГОДОВЫХ
Наше представительство в с. Моргауши
филиал КПКГ "Агрокредит":
ул. 50 лет Октября, д.23, тел. 2-18-13
Услуги предоставляются пайщикам кооператива

**Доставка красного и силикатного кирпича, цемента из завода.**
**Телефон: 8-903-065-58-68. Цены договорные. 5-5.**

**Продаю автомашину ВАЗ-21099 2000 г. в. Цвет аквамарин. Инжектор. Европанель. Сигнализация.**
**Тел.: 8-903-066-47-38.**

**Иккĕ пăрулакă хĕрлĕ ĕне сутатпăр. Талăкри вăтам сăвăм 18 литр. Тел.: 8-927-842-58-40.**

**Продаем цемент, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид, лаки, краски, обои. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 1-5.**

**Продаю ВАЗ-21043, 1993 г.в., цвет белый, двигатель 1500, КПП 4-ступ, магнитола JVC, в хорошем состоянии.**
**Тел.: 8-927-845-15-95.**


«Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕпе профсоюз комитечĕ хуçалăхри пенсионер, ĕç ветеранĕ
**Василий Александрович ЕРДУКОВ**
вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.


ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӰ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Заместитель главного редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3611.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 22.06.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.